# ТĂВАН ЧĔЛХЕН ТĔЛĔНТЕРМĔШ ТĔНЧИ

КĔНЕКЕ çулĕкне нумаях пулмасть симĕс хуплашкаллă, çӳхе чиперкке тухрĕ – "Чăваш чĕлхи. Энциклопеди словарĕ". Ăна пухса хатĕрлекенĕ, редакцилекенĕ – Раççей Федерацийĕн ăслăлăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Л.П.Сергеев профессор /ас тăватăр-и, Муркаш районĕн энциклопедине те вăлах йĕркеленĕччĕ/. Ку кĕнеке вулавçăсем патне вăрăм та тумхахлă çулпа çитрĕ. Çав проекта Леонид Павлович иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсен вĕçĕнче çĕнетĕвĕн çĕкленӳллĕ тапхăрĕнче пуçарнăччĕ. Хисеплĕ ăсчахăн ĕмĕчĕ – тăван чĕлхен энциклопедине хатĕрлесси – майĕпен ытти чĕлхеçĕне те тыткăнларĕ. Пĕрисем ертӳçĕпе пĕрле тӳрех ĕçе кӳлĕнчĕç, теприсене – час-часах тăварăнса каяканнисене – Л.П.Сергеев майласа пычĕ. Пичеврисем чылайăн пулчĕç, анчах тĕп ĕçне унăн хайĕнех пурнăçлама тиврĕ.

Чăваш чĕлхи энциклопедийĕн пĕлтерĕшне тӳре-шара темшĕн ăнланасшăн пулмарĕ. "Чĕлхе саккунне пурнăçа кĕртме" уйăракан укçа-тенке çуллен унталла-кунталла сапаларĕç – тăван чĕлхе тĕнчине уçакан кĕнеке валли нухрат тупаймарĕç. Издательствăна çитсен те ал çыру чылай муритленчĕ, самай кĕскелчĕ. Л.П.Сергеев чĕри витĕр тухнă проект тинех пурнăçа кĕчĕ – кĕнеке пулса халăх патне çитрĕ.

Чăваш чĕлхи мĕн иккенне эпир пурте пĕлетпĕр темелле. Вăл пирĕн ăшра, ăсра, асра. Вăл пирĕн тавра: кăмăллă калаçура, хăр-хар харкашура, чуна хускатакан калавра, кăмăла çĕклекен юрăра, хаçат-журналта, кăшт-кашт радиопа телевиденире, хутран-ситрен – трибуна çинче. Тăван чĕлхе – атте-анне пекех, эпир суйласа илместпĕр ăна. Турă пани тата атте-анне парни вăл. Анчах темшĕн питех хакламастпăр ăна, путлĕ пĕлместпĕр.

Халĕ вара – ан ӳркенĕр кăна: пĕр кĕнекерех тăван чĕлхе пирки тем те вуласа пĕлме пулать. Энциклопедири статьясене тĕрлĕ чĕлхеçĕ – шăп çав ыйтусене лайăх пĕлекенсем – çырнă /шел, ăстасен тепĕр чух ерçӳ çитмен-тĕр, проект ертӳçин, ăнăçсăртарах ылмашусем те тума тивнĕ/. Чăваш чĕлхине тĕпчекенсемпе хайсемпе те паллашма пĕлтĕр диссертаци хӳтĕленисем таранах. Ан тив, пĕрисем чĕлхе пĕлĕвĕн анинче капмар капансурат тăрланă, теприсем çыпăçуллă çĕмелсем хайланă, виççĕмĕшĕсем пĕр-ик кĕлте кăна сыхайнă пултăр. Вĕсем пурте тăван чĕлхешĕн ĕçленĕ /Н.А.Андреев, А.И.Васильев, В.Г.Егоров т.ыт./ е халĕ те ĕçлеççĕ, малашне те тăрăшĕç /И.А.Андреев, Е.Ф.Васильева, Н.И.Егоров т.ыт./.

Чăваш чĕлхипе çыхăннă çĕрçĕр ыйту хуравне çăмăллăнах тупма пулать энциклопедире. Тĕслĕхшĕн темиçе статья ятне асăнар-ха: "Чăваш чĕлхи ăслăлăхĕ", "Чăваш чĕлхин диалектологи атласĕ", "Чăваш чĕлхин пĕрремĕш грамматики", "Чĕлхе географийĕ", "Чĕлхе перекечĕ", "Чĕлхе пĕрчисем". Тĕслĕхрен, сирĕнтен мăнукăр çапла ыйтать тейĕпĕр: *"Чĕлхе мĕн тума кирлĕ?"* Эсир вара хăварăн ăсăра кăна ан шанăр, çĕнĕ энциклопедие уçса "Чĕлхе функцийĕсем /тайăнĕсем/" статьяна тупăр. Унта вара çапла каланă: *"Чĕлхе пулăшнипе çынсем пĕр-пĕринпе хутшăнса пурăнаççĕ, сыхăну тытаççĕ, кирек мĕн пирки те килĕшсе татăлма – "пĕр чĕлхе тупма" – пултараççĕ... Хутшăну вăл – пĕр-пĕринпе тӳрремĕн, куçа-куçăн калаçни кăна мар, кĕнеке е хаçат-журнал вулани те, çыру е статья çырни те".* Кăна эсир ахаль те пĕлнĕ пулĕ-ха. Анчах чĕлхе – хутшăну хатĕрĕ кăна мар иккен: *"Чĕлхе... пулăшнипе çут тĕнче чăнлăхĕ пайăркаланать те пирĕн ăстăнра ӳкерĕнсе юлать. Чĕлхе, çапла вара, ..: шухăшлава йĕркелекен хатĕр пулса тăрать".* Кунсăр пуçне чĕлхен тата халăха пĕтĕçтерекен тайăн, этнос функцийĕ пур иккен: *"Чĕлхе халăхăн пĕлĕвне, ăс-хакăл мулне упрать, çав пурлăха ламран лама, ăруран ăрăва куçса пыма пулăшать. Тăван чĕлхе халăха пĕрлĕх туйăмĕ парать, нацин культура идеологине вăйăм кӳрет".* Чĕлхен пирĕн пурнăçри пĕлтерĕшĕ кунпах иксĕлмест-ха. Пуплевĕн тата кăмăл-туйăм тайăнĕ /эмоципе экспресси функцийĕ/ пур: *"Чĕлхе пире кăмăл-туйăма палăртма пулăшать, ыррине ырлама тата хурине хурлама май парать. Вăл пирĕн ăша вăркатма, чĕрене пăлхатма пултарать тата чуна уçма хевте тупать..."* Кунсăр пуçне чĕлхен, çут çанталăкпа ӳнерĕн пекех, илем тайăнĕ /эстетика функцийĕ/ пур: *"Пуплевĕн шалашĕ çеç мар, тулашĕ те килĕшӳллĕхĕпе, çыпăçулăхпа чуна тыткăнлама пултарать. Чĕлхене туякансем илеме те туяççĕ".*

Чăваш чĕлхине тĕпчесе çырнă сумлă ĕçсемпе те кĕскен паллашма пулать энциклопедире. Грамматикăпа, фонетикăпа, сăмах пулăвĕпе, лексикăпа çыхăннă тĕрлĕ ăнлав çинчен пĕлме те питĕ кăсăклă. "Монгол чĕлхисенчи пăлхар-чăваш сăмахĕсем" йышши статьясем куç тĕлне пулсан – вуласа тухмасăр чăтаймăр. Вăт çавăн пек кĕнеке вăл – чăваш чĕлхин энциклопеди словарĕ!

Ăна хатĕрлес ĕçе йĕркелесе ертсе пынă Л.П.Сергеев профессор "Умсăмахра" çапла çырать: *"Чăваш чĕлхи. Энциклопеди словарĕ" – словарьсем тăвас ĕçри çĕнĕ пулăм, çавăнпа унта тĕрлĕ çитменлĕхпе шăйрăк, паллах, пулма пултараççĕ. Авторсен ушкăнĕ вулакансен шухăшĕсемпе асăрхаттарăвĕсене хапăлласах йышăнма хатĕрри çинчен пĕлтерет".* Эппин эпир те хамăрăн сĕнӳ-асăрхăва кăштах каласа хăварар-ха:

1. Энциклопедире "Чăваш чĕлхин тĕпчевçисем /XVIII-XIX ĕмĕрсем/" ятлă шутсăр пысăк статья /200-206 с./ кирлех пулнă-ши? Унта асăннă хăш-пĕр чĕлхеçĕсен /Й.Буденец, З.Гомбоц, Х.Паасонен т.ыт./ пурнăçĕпе пултарулăхне хайсен вырăнĕнче ахаль те çырса кăтартнă-çке.

2. Çамрăк авторсен энциклопедири хăш-пĕр статйи хавшакрах пулса тухнă. Сăмахран, пĕри "Н.А.Резюков... Н.И.Ашмаринăн 17 томлă словарĕн XVI-XVII томĕсене пичете хатĕрленĕ" тесе пĕлтерет. Çав томсене уçса пăхăр-ха: кашнинех "Ку кăларăма пичете А.Л.Лакин хатĕрленĕ" тенĕ. Николай Резюков вара "Чăваш сăмахĕсен кĕнекин" II-VII томĕсене йĕркелеме хутшăннă, Ашмарин вилнĕ хыççăн словарĕн VII-XIV томĕсене хăй тĕллĕн пичете хатĕрленĕ, XVII томăн яваплă редакторĕ пулнă /словарь "Хыçсăмахне" те вăлах çырнă/. Унсăр пуçне Николай Андреевич – грамматика тĕпчевĕсен, шкул кĕнекисен т.ыт. авторĕ.

3. В.Г.Егоровăн та, М.Р.Федотовăн та словарĕсем пĕр ятпа пичетленсе тухнă – "Этимологический словарь чувашского языка". Анчах энциклопедире пĕрне "Чăваш чĕлхин этимологи словарĕ" статьяра, теприне "Этимологический словарь чувашского языка" тенĕ çĕрте шырамалла иккен. Вĕсене, калăпăр, "Этимологи словарĕ" ятлă статьяна пĕрлештерни вулавçăшăн меллĕрех пулĕччĕ /танлаштарăр: энциклопедире "Ăнлантару словарĕ", "Ик чĕлхе словарĕ", "Терминологи словарĕ" ятлă статьясем пур/.

4. Персоналисемпе çыхăннă хăш-пĕр йăнăша, тен, хăйне майлă шӳт пек йышăнма пулать пулĕ: пĕрне /42 с./ çамрăклатса кăтартнă, теприне /60 с./ пысăкрах ĕç вырăнĕ панă. Шел, виççĕмĕшĕсене /Н.Н.Поппе, Э.В.Фомин, т.ыт./ пачах манса хăварнă.

Тепĕр тесен, кун пек пысăк та пархатарлă ĕç пач шăйрăксăр пулмасть те ĕнтĕ. Мĕн пуррипе киленме пĕлер-ха эппин. Л.П.Сергеев профессор ертсе пынипе хатĕрленĕ "Чăваш чĕлхи. Энциклопеди словарĕ" ятлă кĕнекене илер те тăван чĕлхен тĕлĕнтермĕш тĕнчипе тĕплĕрех паллашар. Усăллипе кăсăкли пурин валли те тупăнать унта.

**Геннадий ДЕГТЯРЕВ,**
**филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ.**